26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ЯНВАРЬ
29
ШАМАТКУН
20(6515) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне МЕРЕЦКОВА

ВОЛХОВ фронтĕнчи çарсем, наступление вăйлатса пырса, ĕнер январĕн 27-мĕшĕнче, ТОСНО хулипе пысăк чугун çул узелне йышăнса илчĕç, паян, январĕн 28-мĕшĕнче, ЛЮБАНЬ хулипе паха чугун çул станцине тытса илчĕç тата Любаньрен кăнтăртарахра ПОМЕРАНЬЕ, ТРУБНИКОВ БОР, БАБИНО, ТОРФЯНОЕ ятлă чугун çул станцийĕсене йышăнса илчĕç. Çапла вара, МУСКАВА ЛЕНИНГРАДПА çыхăнтарса тăракан тĕп магистрале—Октябрьски чугун çула пĕтĕм тăршшĕпех, ЧУДОВО станцийĕсĕр пусне, нимĕç захватчикĕсенчен тасатнă, Чудово станцийĕнчи тăшмана та халĕ çавăрса илнĕ, пĕтерсе пыраççĕ.

ТОСНО тата ЛЮБАНЬ хулисене тытса илессишĕн пынă çапăçусенче РОГИНСКИЙ генерал-лейтенантăн, ФЕТИСОВ генерал-майорăн, КАЗАЧЕК генерал-майорăн, ПЛАТОВ генерал-майорăн, АБСАЛЯМОВ генерал-майорăн, ИСАКОВ полковникăн, ЦЫГАНКОВ полковникăн, ПАРШИКОВ подполковникăн çарĕсем, артиллери генерал-майорĕн ПЕТРОПАВЛОВСКИН артиллерисчĕсем, танковăй çарсен генерал-майорĕн ИВАНОВАН танкисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çитĕнĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăссене «ТОСНЕНСКИ тата «ЛЮБАНЬСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, январĕн 28-мĕшĕнче, 23 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ çĕр çирĕм тăвата тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, ТОСНО тата ЛЮБАНЬ хулисене тытса илнĕ хамăрăн паттăр çарсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, ТОСНО тата ЛЮБАНЬ хулисене ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешÿре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1944 çулхи январĕн 28-мĕшĕ.

Ленинград фронтĕнчи çарсене панă Приказ

Юлташсем — Ленинград фронтĕнчи çарсен красноармеецĕсем, сержанчĕсем тата офицерĕсем!

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн морякĕсем! Ленин хулинчи ĕççыннисем!

Ленинград фронтĕнчи çарсем вуникĕ кун хушши хĕрÿллĕн çапăçнă хыççăн нимĕçсен вăйлă çирĕплетнĕ, шалалла инçете тăсăлса выртакан, нумай вăхăта тунă оборонине Ленинград патĕнчи пĕтĕм фронт тăршшĕпех татрĕç, çĕнтерчĕç, тăшманăн Ленинград патĕнчи хирĕç тăмалли питĕ кирлĕ узелĕсене тата опорнăй пункчĕсене — КРАСНОЕ СЕЛО, РОПША, УРИЦК, ПУШКИН, ПАВЛОВСК, МГА, УЛЬЯНОВКА, ГАТЧИНА хулисене тата ыттисене те штурмласа тытса илчĕç, ăнăçлăн наступлени туса пырса, халăх пурăнакан 700 пункта ытла ирĕке кăларчĕç, тăшмана Ленинград патĕнчен пĕтĕм фронт тăршшĕпех 65—100 километра хăваласа ячĕç. Халĕ пирĕн çарсем малалла тапăнса пыраççĕ.

Наступлени туса пынă чухне пирĕн çарсем Ленинграда хупăрласа тăнă тăшман çарĕсене аркатса тăкрĕç тата трофейăсем нумай тытса илчĕç.

Çапăçусенче историри паха задачăна татса панă: Ленинград хулине тăшман блокадинчен тата тăшман хăйĕн артиллерипе варварла персе тăнинчен йăлтах хăтарнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе тата Ленинграда тăшман блокадинчен пĕтĕмпех ирĕке кăларнă ятпа паян, январĕн 27-мĕшĕнче, 20 сехетре, Ленин хули, виççĕр çирĕм тăватă тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, Ленинград фронтĕнчи паттăр çарсене салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн фронтри пĕтĕм çарсене тата Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн морякĕсене, Ленинграда блокадăран ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Ленинград гражданĕсем! Ленинградăн хастарлă та çирĕп çыннисем! Ленинград фронтĕнчи çарсемпе пĕрле эсир хамăрăн Тăван хулана хÿтĕлесе хăвартăр. Паттăррăн ĕçлесе, хурçă пек чăтăмлă пулса, блокадăн мĕнпур йывăрлăхĕсемпе асапĕсене сире-сире пырса, эсир тăшмана çĕнтермелли хĕçпăшал туптаса тăтăр, хăвăрăн мĕнпур вăйăрсене тăшмана çĕнтермешкĕн патăр.

Ленинград фронтĕнчи çарсен ячĕпе сире Ленинград патĕнче тăшмана чаплăн çĕнтернипе САЛАМЛАТĂП.

Ленинград фронтĕнчи воинсене мухтав!

Ленин хулинчи ĕççыннисене мухтав!

Ленин хулишĕн тата хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав.

Верховный Главнокомандующий Совет Союзĕн Маршалĕ асăл Сталин ертсе пынипе — малалла, нимĕç ирсĕрĕсене пирĕн çĕршывăн пĕтĕмпех хăваласа кăларма!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Ленинград фронтĕнчи çарсен командующийĕ армии-генералĕ Л. ГОВОРОВ.

Çар Совечĕн членĕ генерал-лейтенант А. ЖДАНОВ.

Çар Совечĕн членĕ генерал-лейтенант А. КУЗНЕЦОВ.

Çар Совечĕн членĕ генерал-майор Н. СОЛОВЬЕВ.

Фронт штабĕн начальникĕ генерал-лейтенант Д. ГУСЕВ.

1944 çулхи январĕн 27-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 27-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Январĕн 27-мĕшĕнче пирĕн çарсем ГАТЧИНА хулинчен хĕвеланăçнерехре, кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра, наступлени туса пырса, ВОЛОСОВО хулипе чугун çул узелне тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăнса илнĕ, вăл шутра ЗАКОРНОВО, ЛОПУХИНКА, НОВАЯ БУРЯ, НОВЫЕ МЕДУШИ, МУХОВИЦЫ, СТАРАЯ БУРЯ, СЛЕПИНО, ШЕЛКОВО, БОЛЬШОЕ ТЕШКОВО, МАЛОЕ ТЕШКОВО, СТАРОЕ ГРЕБЛОВО, КЛОПИЦЫ, РОНКОВИЦЫ, ЧЕРЕПОВИЦЫ, СУМИНО, БОЛЬШИЕ ГУБАНИЦЫ, МАЛЫЕ ГУБАНИЦЫ, РОГОВИЦЫ, БОЛЬШОЕ КИКЕРИНО, МАЛОЕ КИКЕРИНО, ЕЛИЗАВЕТИНО, НИКОЛАЕВКА, ШПАНЬКОВО, БОЛЬШОЕ ТЯГЛИНО, ВЫСОКО-КЛЮЧЕВОЕ, ВОСКРЕСЕНСКОЕ ятлă пысăк ялсене тата ЕЛИЗАВЕТИНО, КИКЕРИНО, СУЙДА ятлă чугун çул станцийĕсене.

Пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Ленинград облаçĕнчи район центрне—ТОСНО хулипе чугун çул узелне тытса илнĕ.

ТОСНО хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, малалла куçса пынă, ВЛАСНИКИ, ЗАБОРЬЕ, КОВШОВО, ВИРКИНО, РЫНДЫЛЕВО, ПОГИ, КАЙБОЛОВО, КУНГОЛОВО, ЕГЛИЗИ, БОЛЬШОЕ ЛИСИНО, СТРОЕНИЕ ятлă ялсене тытса илнĕ.

ЛЮБАНЬ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата çурçĕртерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, РЯБОВО, ЛИПКИ, ВЕРЕТЬЕ, БОРОДУЛИНО, ИЛЬИНСКИЙ ПОГОСТ ятлă ялсене тытса илнĕ тата ЛЮБАНЬПЕ ТОСНО хулисем хушшинчи чугун çула шоссе çулне тăшманран пĕтĕмпех тасатнă. Пирĕн çарсем ЛЮБАНЬ хулипе чугун çул станцине тытса илнĕ.

НОВГОРОД хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, наступлени туса пырса, ДЕХОВО, ЗАБОЛОТЬЕ, ХОТОБУЖИ, ДОСКИНО, ТАНИНА ГОРА, КОСИЦКОЕ, ГЛУХОЙ БЕРЕЖОК, ОЖОГИН ВОЛОЧЕК, УНОМЕР, НОВОЕ ВЕРЕТЬЕ, МЕЖНИК, ШАРОК, ВЕРХНИЙ ПРИХОН, ТЕРЕБУТИЦЫ ятлă ялсене тытса илнĕ.

ВИННИЦА хулинчен хĕвелтухăçнерехре тата ХРИСТИНОВКА хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем çаплах тăшман танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă, нимĕçсене çынсемпе техника енчен пысăк çухатусем кÿнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведка тунă, тăшмана хирĕç артиллерипе миномётсенчен персе тăнă тата чылай пунктсенче тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Январĕн 26-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 82 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 16 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Гатчина хулинчен хĕвеланăçнерехре, кăнтăр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах ăнăçлăн наступлени туса пынă. Пĕр соединени чăсĕсем, çав тери хăвăртлăн атакăласа, Волосово хулипе чугун çул узелне тытса илнĕ. Тăшманăн çĕмĕрсе тăкнă чăсĕсем нимĕн йĕркисĕр каялла чакнă, вĕсем темĕн чухлĕ хĕçпăшал, боеприпас тата тĕрлĕрен çар япалисем пăрахса хăварнă. Пирĕн ытти чăссем, малалла куçса пырса, халăх пурăнакан 40 пункта ытла тытса илнĕ. Кун каçиччен пулса иртнĕ çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 3.000 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Малтанлăха шутласа тухнă тăрăх, пирĕн çарсем Гатчина хулинче нимĕçсенчен 10 танк, 100 тупă ытла, 85 миномет, 200 пулемет ытла, 2.000 автоматпа винтовка, автомашинăсем, çар хатĕрĕсем тиенĕ чугун çул вагонĕсем нумай, апат-çимĕç, боеприпас тата тĕрлĕрен çар шурлăхĕн пысăк склачĕсене тытса илнĕ. Гатчина хулинче совет боецĕсем нимĕçсен Германие каторгăна хăваласа кайма хатĕрленĕ 5.000 совет гражданне ытла ирĕке кăларнă.

* * *

Пирĕн çарсем, шурлăхлă вырăнсенчи ытла та йывăр условисенче кĕрешсе, Тосно хулипе чугун çул узелне тытса илнĕ. Нимĕçсем, нумай вăхăтлăха тусă хунă укреплениесемпе усă курса, ку хулана хытă хÿтĕленĕ. Совет чăсĕсем Тосно хулине виçĕ енчен çавăрса илнĕ те ĕнер çĕрле татăклăн штурмланă. Тăшман гарнизонĕн пысăк пайне пĕтерсе тăкнă. Нимĕç салтакĕсен пĕр пайĕ, вĕсем хĕçпăшала пăрахса, тыткăна парăннă. Тосно чугун çул узелĕнче трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Любань хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата çурçĕртерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă. Пĕр соединени чăсĕсем нимĕçсен Любань хули патнелле пыракан вырăнти оборонине татнă та, малалла кĕрсе

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Информациллĕ пĕлтерÿ

ВКП(б) Центральный Комитечĕн черетлĕ пленумĕ çинчен

ÇАК КУНСЕНЧЕ МУСКАВРА ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔН ЧЕРЕТЛĔ ПЛЕНУМĔ ПУЛСА ИРТНĔ.

ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕТĂН ПЛЕНУМĔ, ОБОРОНА ТАТА ТУЛАШРИ ÇЫХĂНУСЕМ ТĔЛĔШПЕ СОЮЗЛА РЕСПУБЛИКĂСЕН ПРАВИСЕНЕ АСЛĂЛАТМА СССР СОВНАРКОМĔ СĔННИСЕНЕ ПАХСА ТУХСА, ВĔСЕНЕ СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ПУЛАС СЕССИНЕ ТĂРАТМАШКĂН ЫРЛАНĂ.

МАЛАЛЛА ПЛЕНУМ ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ СЕССИНЕ ПАХСА ТУХМАЛЛИ ОРГАНИЗАЦИЛЛĔ ЫЙТУСЕНЕ СÿТСЕ-ЯВНĂ.

КУНСĂР ПУÇНЕ ПЛЕНУМ ТИВĔÇЛĔ ОРГАНСЕМ ГОСУДАРСТВĂН КИВĔ ГИМННЕ «ИНТЕРНАЦИОНАЛА» ГОСУДАРСТВĂН ÇĔНĔ ГИМНĔПЕ — «СОЮЗ НЕРУШИМЫЙ РЕСПУБЛИК СВОБОДНЫХ» ЯТЛĂ ГИМНПА УЛĂШТАРМА ТАТА «ИНТЕРНАЦИОНАЛ» ГИМНА ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (БОЛЬШЕВИКСЕН) ПАРТИЙĔН ГИМНĔ ВЫРĂННЕ ХĂВАРМА ЙЫШĂННИНЕ ТĔРĔС ТЕСЕ ХАКЛАНĂ.

ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсен пропаганда отделĕсен, райçутĕç пайĕсен заведующийĕсен тата ВЛКСМ райкомĕсемпе горкомĕсен секретарĕсен республикăри канашлăвĕ

Шупашкарта, Пионерсен Çуртĕнче, ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсен пропаганда отделĕсемпе райçутĕç пайĕсен заведующийĕсен, ВЛКСМ райкомĕсемпе горкомĕсен иккĕмĕш секретарĕсен пĕрлехи канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура ВКП(б) райкомĕсемпе хула комитечĕсен секретарĕсем те пулчĕç.

Канашлу шкул тулашĕнчи ĕçе мĕнле туса пыни çинчен ВКП(б) Обкомĕн шкулсен отделĕн заведующийĕ Шалфеева юлташ, Сталин юлташăн «Совет халăхĕн Отечественнăй аслă вăрçи çинчен» ятлă кĕнекине вĕренесси интеллигенципе комсомолецсем хушшинче мĕнле пыни çинчен ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ Иванов юлташ, кăçалхи вĕренÿ çулĕн малтанхи çурçулĕнчи итогсем çинчен Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕн Макаров юлташ, çураки умĕнхи политикăллă-массăллă ĕç çинчен ВКП(б) Обкомĕн пропаганда отделĕн заведующийĕн заместителĕ Сдобнов юлташ тунă докладсене сÿтсе-яврĕ.

Совет шкулĕ çирĕп пĕлÿллĕ, культурăллă, ĕçлеме пултаракан, дисциплинăна пăхăнакан тата сывлăхлă çынсем пăхса ÿстерме тивĕçлĕ. Çак хисеплĕ задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыма вĕренÿпе воспитани ĕçне шкулсенче кăна лайăх йĕркелени çителĕксĕр-ха, шкул тулашĕнчи ĕçе те тивĕçлипе организацилес пулать.

ВКП(б) Обкомĕн шкулсен отделĕн заведующийĕ Шалфеева юлташ тата унăн докладĕ тăрăх пренире тухса калакансем партипе комсомол организацийĕсемпе çутĕç органĕсем шкул тулашĕнчи ĕçе чылай лайăхлатнине палăртрĕç, çавăнпа пĕрлех пысăк çитменлĕхсене уçса палăртрĕç.

Республика пурне те хут вĕрентмелли закона пурнăçа кĕртеймерĕ. Кăçалхи вĕренÿ çулĕнче 1724 ача шкул тулашĕнче юлнă. Унтан та ытларах вĕренĕве явăçтарнисенчен тĕрлĕ сăлтавсемпе 800 ача ытла шкулсене çÿреме пăрахнă.

Мĕнле сăлтавсем-ха вĕсем? Калас пулать, çакă вăл, йăлтах çутĕç органĕсем, партипе совет тата комсомол организацийĕсем ачасене вĕренме лайăх условисем туса парассишĕн тимлĕн тăрăшманнинчен килнĕ. Çутĕç органĕсем, комсомол организацийĕсем хăшпĕр ачасем вĕренме çÿреме пăрахнине тĕпчесе пĕлмеççĕ, вĕсене вĕренĕве татах та явăçтарассишĕн тăрăшмаççĕ, кирлĕ пулăшу памаççĕ.

Вĕренекенсен хăйсене тыткаламалли правилăсем—ачасен прависемпе обязанноçĕсене палăртса параççĕ. Вĕренекенсене çав правилăсене пурнăça кĕртме вĕрентессишĕн шкулсен çеç мар, ачасен шкул тулашĕнчи пĕтĕм организацийĕсен те тимлĕн тăрăшмалла. Ачасем шкулта талăкра пурĕ те 5—6 сехет хушши çеç пулаççĕ. Ытти пушă вăхăта вĕсем усăллă ирттерме тивĕçлĕ.

ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ Иванов юлташ хăйĕн докладĕнче республикăра Сталин юлташăн кĕнекине вĕренесси мĕнле пыни çинчен тĕплĕн сутатса пачĕ, малашнехи задачăсем çинче чарăнса тăчĕ. Унăн докладĕ тăрăх пренире тухса калакансем уйрăм районсенчи çитменлĕхсене уçса палăртрĕç.

Сталин юлташăн кĕнекине вĕренесс ĕçри çитменлĕхсем çинчен пренире тухса каланă ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ М. А. Андреев юлташ тĕплĕн чарăнса тăчĕ. Вăл Сталин юлташăн кĕнекине пропагандăпа агитаци ĕçĕн тĕп никĕсне хума кирли çине кăтартса пачĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи виççĕмĕш вĕренÿ çулĕн малтанхи çурçулĕ шкулсенче вĕренÿпе воспитани ĕçĕ лайăхланнипе паллă пулса тăрать. Апла пулин те вĕренÿпе воспитани ĕçне лайăх организацилени теме çук-ха.

Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссарĕ Макаров юлташ хăйĕн докладĕнче шкулсен ĕçĕнчи нумай çитменлĕхсене кăтартса пачĕ. Чи пысăк тата тĕп çитменлĕх вăл—пурне те хут вĕрентмелли закона пурнăçа кĕртменни. Шкулсен хисепĕ пурне те хут вĕрентмелли закона пурнăçа кĕртме май парать, анчах çутĕç органĕсем сÿрĕк ĕçлеççĕ, çавăнпа вăл закона тивĕçлипе пурнăçа кĕртмен. Партипе совет организацийĕсем юлашки вăхăтра шкулсене пулăшас ĕçе сÿрĕклетнĕ. Хăшпĕр шкулсем вутăсăр ларни те çавăн çинчен калать ĕнтĕ.

Сдобнов юлташ хăйĕн докладĕнче политикăллă-массăллă ĕç ĕççыннисене умра тăракан задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме мобилизацилемелли хăватлă вăй пулса тăнине нумай примерсемпе çирĕплетсе пачĕ. Çавăнпа пĕрлех вăл чылай районсенче политикăллă-массăллă ĕçе кирлĕ пек йĕркелеменнине кăтартса пачĕ, çураки вăхăтĕнче çав ĕçе мĕнле организацилемелли çинчен чарăнса тăчĕ.

Доклад тăрăх пренире тухса калакансем политикăллă-массăллă ĕçе вырăнсенче мĕнле йĕркелесе пыни çинчен каласа пачĕç.

Канашлăва пухăннисем пур ыйтусем тăрăх та лайăх сĕнÿсем пачĕç.

РСФСР-ти вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕн работникĕсене 1942—1943 çулсенче санитари пурлăхĕ парса тăнăшăн наградăлани

ССР Союзĕн Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи январĕн 18-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, РСФСР-ти вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕн работникĕсен пысăк ушкăнне 1942—43 çулсенче Хĕрлĕ Çара çар обозĕсемпе санитари пурлăхĕ парса тăнăшăн наградăланă.

Чăваш республикинчен çаксене наградăланă:

«Хисеп палли» орденпа—Николай Михайлович Титова, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Крестьянский кузнец» артелĕн председательне.

«Ĕçри хастарлăхшăн» медальпе — Алексей Семенович Мачкасина, Çĕмĕрле районĕнчи «Лесоруб» артелĕн председательне.

«Ĕçре палăрнăшăн» медальпе — Иван Иванович Куданова, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Крестьянский кузнец» артелĕн тимĕрçине.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пани

Кăçал январĕн 15-мĕшĕнче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ З. А. Андреева юлташ Челноков юлташ главнăй инженер пулса тăракан заводри рабочисемпе инженерла-техникла работниксене тата ертсе пыракан работниксене Хисеплĕ грамотăсем панă.

Производство планĕсене ăнăçлăн тултарнăшăн Хисеплĕ грамотăсене çаксем илнĕ: мастер Н. Н. Батурина, работница А. Д. Гаранина, мастерской начальникĕ А. Г. Ермак, цех технологĕ Н. Н. Иванова, работница А. К. Карпова, старши мастер Н. Т. Кушников, цех начальникĕ И. П. Лебедев, А. Л. Лившиц, цех начальникĕ А. А. Макаров, автогараж механикĕ Д. Н. Морозов, прессовщик Ф. И. Наумов, работница Н. Ф. Орлова, старши мастер В. М. Петрушкин, техникăллă контроль отдел начальникĕн заместителĕ А. А. Плешанов, каменщик М. К. Ращупкин, старши мастер Е. С. Румянцева. главнăй энергетик С. К. Суровов, мастер Е. В. Сытник т. ыт. те.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура ÿсĕмсем тунăшăн А. С. Семенова работницăна Хисеплĕ грамота панă.

Кун хыççăн Шупашкар хулинчи электростанци строительствинче тунă çитĕнÿсемшĕн çаксем Хисеплĕ грамотăсем илчĕç: столяр Е. А. Андреев, электроцехри мастер И. К. Волков, шофер А. Д. Дроздова, электромонтер С. Е. Егоров, работница М. И. Ильина, работница К. Т. Кадышева, постройком председателĕ М. М. Каневский, строительствăн главнăй инженерĕ Н. И. Киселев, платниксен бригадирĕ К. Ф. Ларин, слесарь З. Ф. Малинов, строительствăн главнăй механикĕ А. М. Плаксин, т. ыт. те.

Юлашкинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ наградăланисене Хисеплĕ грамотăсем илнĕ ятпа тав тунă, малашнехи ĕçре çитĕнÿсем тума суннă.

Абиссини (Эфиопия) посланникĕ г-н Б. Л. Таэзас ССР Союзне килни

Кăçалхи январĕн 27-мĕшĕнче Абиссинин (Эфиопин) ССР Союзĕнчи чрезвычайнăй посланникĕ тата полномочнăй министрĕ г-н Блатенгета Лоренцо Таэзас Мускава килнĕ.

Аэродромра Б. Л. Таэзас господина НКИД-ăн сывăх-хĕвелтухăç отделĕн заведующийĕ А. И. Лаврентьев юлташ тата НКИД-ăн протокольнăй отдел заведующийĕн ĕçĕсене тăваканĕ Г. И. Фомин юлташ кĕтсе илнĕ.

РЕСПУБЛИКĂРА 1944 ÇУЛХИ ЯНВАРĔН 25-МĔШЕ ТĔЛНЕ ТРАКТОРСЕМ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА МĔН ЧУХЛЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

МТС-сем	Пурĕ тĕпрен юсанă тата текущи ремонт тунă (процентпа)	Çав шутран январь уйăхĕнчи плана тултарнă (процентпа)
Красноармейски	100,0	250,0
Шăхасан	92,8	222,2
Шупашкар	82,0	175,0
Комсомольски	80,0	—
Йĕпреç	76,0	66,6
Ишлей	73,0	100,0
Сĕнтĕр	63,8	90,0
Вăрнар	58,4	25,0
Канаш	56,7	69,2
Элĕк	54,5	75,0
Çĕмĕрле	53,8	66,8
Шăмăршă	52,7	62,5
Хĕрлĕ Чутай	52,2	50,0
Первомайски	52,0	160,0
Чкаловски	51,9	100,0
Етĕрне	51,2	100.0
Куславкка	50,0	70,0
Вăрмар	48,9	66,6
Сĕнтĕрвăрри	48,0	50,0
Елчĕк	47,5	45,4
Çĕрпÿ	47,4	40,0
Кувакино	40,4	93,3
Тăвай	40,0	—
Улатăр	31,3	43,7
Пăрачкав	30,2	30,0
Пĕтĕмпе	54,9	78,5
Январĕн 20-мĕшĕ тĕлне пулнă	51,1	60,0

Фронтовиксен семьисене пулăшаççĕ

ШАХАСАН. Шĕкĕрти «Новый путь» колхозра фронтовиксен семьисене тăванла пулăшаççĕ. Вырăнхăчĕрлĕхсĕр семьесене колхоз правленийĕ кăçал фермăран 9 пăрус, 12 семьене алшиш чăлхасем çыхма çăм парса пулăшрĕ. Фронтовик арăмĕсем Ксения Гаврилова, Ольга Михайлова колхоз пулăшнипе пĕр ĕçрен юлмасăр ывăнма пĕлми ĕçлеççĕ. О. Михайлова иртнĕ çул хăй пĕччен 350 ĕçкунĕ тунă

Т. ГРИГОРЬЕВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ЯНВАРĔН 27-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКĂН ВĔÇĔ

кайса, хула тулашĕнче çапăçма пуçланă. Кун каçа нимĕçсен 800 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 9 тупă, 14 миномет (вĕсенчен виççĕшĕ ултă кĕпçеллисем) пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 12 тупă, 16 миномет, боеприпас склачĕ тата 3 радиостанци тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем испанецсен легионне йывăр çухатусем кÿнĕ. Испани салтакĕсене чылайĕшне тыткăна илнĕ.

* * *

Новгород хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, ăнăçлă наступлени туса пынă. Тăшман пехотин икĕ полкне тата унччен çапăçусенче çĕмĕрсе тăкнă дивизийĕсен юлашкийĕсенчен тунă темиçе ушкăнне аркатса тăкнă. Новгородран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем темиçе ял тытса илнĕ. Нимĕçсем ку района фронтăн ытти участокĕсенчен васкавлăн çĕнĕ резервсем илсе пынă. Çапах та тăшмана, пысăк çухатусем кÿрсе, çĕнĕрен каялла ывăтса янă.

* * *

Новосокольникирен çурçĕртерехри пĕр участокра тăшманăн икĕ полка яхăн пехоти ирхине ирех пирĕн позицисене атакăланă. Пирĕн чаçсем, пур тĕрлĕ хĕçпăшалпа та персе, гитлеровецсене пысăк çухатусем кÿнĕ, вара нимĕçсем малтанхи позицисем çине чакнă. Кун каçиччен тăшман хăйĕн ĕçтерсе ÿсĕртнĕ салтакĕсене тата тăхăр хутчен атакăна кĕрте-кĕрте янă. Нимĕçсем темĕн чухлĕ снаряд, мина персе пĕтернĕ. Çапăçу ку участокра сĕм пĕтĕм пуличченех пынă. Пирĕннисем гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янă. Пирĕн скопсем умĕнче тăшманăн 1.500 виллине çити выртса юлнă.

* * *

Винница хулинчен хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшман танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă. Нимĕçсем, 20-шер—30-шар танкпа ушкăнсене пайланса çапăçса, авиаци пулăшнипе, совет оборонинче вăйсăртарах вырăн тупма хăтланнă. Çав танксен кашни ушкăнĕ хыçĕнче пĕр батальон е икĕ батальон пехота пынă. Гитлеровецсем пысăк çухатусем тÿснĕ, анчах пĕр участокра та çĕнтереймен. Çав çапăçура совет чаçĕсем тăшман пехотине пĕр полк таран пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 65 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен тупине, 5 бронемашинине тата 13 бронетранспортерне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Хура тинĕс флотĕнчи авиаци тăшманăн пĕтĕмĕшпе 5.000 тонна таякан икĕ суднине, десант антармалли хăвăрт çÿрекен баржине тата хăй тĕллĕн çÿрекен икĕ баржине шыва путарнă.

* * *

Каменец-Подольск облаçĕнче кĕрешекен партизансен темиçе отрядĕ пĕр уйăх хушшинче нимĕçсен 27 çар эшелонне минăсем лартса сирпĕнтерсе е ÿпĕнтерсе янă. Çав крушенисене пула тăшман çарĕсемпе çар хатĕрĕсене турттарса пыракан 200 вагонпа платформа ытла çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Январĕн 4-мĕшĕнче партизансен ушкăнĕ пĕр чугун çул станцийĕнче нимĕç чаçĕн гаражне унти автомашинăсемпе пĕрлех çунтарса янă.

Апат-çимĕç промышленноçне татах та вăйлатса пырар

Çак кунсенче Шупашкарта республикăри апат-çимĕç промышленность работникĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлу апат-çимĕç промышленноçĕн 1943 çулхи ĕçĕсен итогĕсемпе 1944 çулхи задачисем çинчен Чăваш АССР Апат-çимĕç промышленность Халăх Комиссарĕн Калинкина юлташăн докладне сÿтсе-яврĕ.

Апат-çимĕç промышленноçĕ 1943 çулхи программăна 107,7 процент пурнăçларĕ. Çапла вара, вăл планран ирттерсе 861 пин тенкĕлĕх продукци пачĕ. 1943 çулта апат-çимĕç наркоматне кĕрекен 25 предприятипе трестсенчен 21 предприятийĕпе тресчĕ çулталăкри задание ытлашшипех пурнăçланă.

1942 çултипе танлаштарсан, апат-çимĕç промышленноçĕ иртнĕ çулта продукци кăларассине икĕ хута яхăн ÿстерчĕ. 1943 çулта çĕнĕрен 35 производство цехĕсем организациленĕ. Çĕнĕ продукцисенчен — мальтова, хĕрлĕ эрех, спирт, чей ĕçмеллисем тата ытти ĕçме-çимеллисем пăвас ĕçе пуçарса янă.

Иртнĕ çулта уйрăмах Кувакино, Вăрмар, Çĕрпÿ, Çĕмĕрле районĕсенчи комбинатсем тата Канашри апат-çимĕç комбиначĕ аван ĕçлерĕç.

Кувакинăри апат-çимĕç комбиначĕ (директорĕ Жаров юлташ) 1943 çулта производство планне 226 процент пурнăçланă. Вăл, вырăнти ресурссемпе туллин усă курса, 25,5 тонна варени, 16,5 тонна премĕк, сахăр вырăнне усă курмалли мальтоза 33,8 тонна туса кăларнă. Çавăн пекех Çĕмĕрле, Канаш апат-çимĕç комбиначĕсем те продукци кăларассине икĕ хут ÿстерчĕç.

Республикăра лайăх ĕçлекен апат-çимĕç предприятийĕсемпе пĕрлех начар ĕçлекеннисем те пур-ха. Тĕслĕхрен, Шупашкарти макарон фабрики (директорĕ Столяров). Первомайскинчи крахмал завочĕ (директорĕ Гусев), Пăрачкаври мелькомбинат тата Сĕнтĕр, Октябрьски районĕсенчи апат-çимĕç комбиначĕсем çулталăкри плана пурнăçлаймарĕç. Шупашкарти макарон фабрики плана 25 процент чухлĕ пурнăçлаймарĕ. Калинкина юлташ апат-çимĕç предприятийĕсем кашни уйăхрах пĕр-тикĕс ĕçлесе пыманнине палăртать. Хăшпĕр уйăхра производство планне ытлашшипех тултараççĕ, хăш чухне вара плана тултармасăр ĕçлеççĕ. Апат-çимĕç ĕçĕнче вырăнти чĕртаварсемпе туллин усă курни тата вĕсене хатĕрлени кирлĕ. Анчах та ку тĕлĕшпе вара апат-çимĕç работникĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Тĕслĕхрен, çĕрулми хатĕрлес плана 56,8 процент çеç пурнăçланă.

Докладчик, республикăри апат-çимĕç комбиначĕсемпе предприятийĕсен ĕçĕсем çинчен тĕплĕн чарăнса тăрса, 1944 çулта тăракан задачăсене палăртрĕ.

Доклад тăрăх прение 23 çын тухса каларĕç. Тухса калаçакансем хăйсен ĕç спычĕсемпе çитменлĕхĕсене палăртрĕç.

Канашлура Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕ Никитин, ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕн промышленноçпа транспорт енĕпе ĕçлекен заместителĕ Репкин, ЧАССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ Лихачев юлташсем тухса каларĕç. Вĕсем республикăри апат-çимĕç промышленность работникĕсем умĕнче тăракан задачăсем çинче тĕплĕн чарăнса тăчĕç.

Юлашкинчен, канашлу участникĕсем республикăри апат-çимĕç работникĕсене 1944 çулта татах та тухăçларах ĕçлеме чĕнсе калание йышăнчĕç.

Колхоз çамрăкĕсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕ

Сĕнтĕрте шухăшлаççĕ çеç-ха...

Райсоветăн физкультурăпа спорт инспекторĕ Л. Капустина фабрикăна телефонпа шăнкăртаттарать:

— Фабрика! Фабрика! Йĕлтĕрлĕ ăмăртăва хатĕрленес ĕç мĕнле шырать унта?!

Пир-авăр фабрики райсовет исполкомĕнчен урам урлă кăна, Капустина юлташ унта çитсе курман-ха. Вăл унти çамрăксем йĕлтĕрлĕ ăмăртăва мĕнле хатĕрленни çинчен те пĕлмест.

Районра йĕлтĕрлĕ ăмăртăва хатĕрленес ĕçе Капустина юлташ çине «тиенĕ». Бăлах—оргкомитет членĕ. ытти членсем вара ку тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ. Хушман та тумаççĕ ĕнтĕ...

Оргкомитет членĕсене ĕçсем парас тесе, икĕ хутчен лару тума тытăннă. Оргкомитет председателĕ С. Давыдова юлташ: «Килмеççĕ те, мĕн тăвас»,—тет. Аптрамалла...».

ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Давыдова юлташ йĕлтĕрлĕ ăмăртăва хатĕрленес тĕлĕшпе оргкомитет членĕсем ĕçлеменнишĕн ÿпкелешет. Осоавиахим райсовечĕн председателĕ Тямков юлташ, оргкомитет членĕ пулин те, нимĕн те тумасть.

— Мана пирвайхи хут çеç каларĕç-ха, паянхи кунччен никам та пĕр сăмах та каламан,—тет вăл

Пыр та тушсăмне туп кунта: йĕлтĕрлĕ ăмăртăва ирттерес тĕлĕшпе никам та ответлă мар. ВЛКСМ райкомĕ ку ĕçрен аякра тăрать.

Январĕн 17-мĕшĕнче пĕррамĕш хут çак ыйтупа лару пулса иртрĕ. Ларура оргкомитетăн кашни членне ĕçсем парса тухрĕç. Йĕлтĕрлĕ командăсем миçе тĕлте тумаллине палăртса хучĕç.

Пĕркунтарах районра 12 çĕрте йĕлтĕрлĕ командăсем тума шутланăччĕ. Халĕ ĕнтĕ кашни ялсоветрах пĕрер команда тума шутларĕç.

Районра йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне лайăх ирттерме пур майсем те пур. Капустина юлташ пĕлтернĕ тăрăх, районра 2446 мăшăр йĕлтĕр пур.

— Йĕлтĕрсем пур та, çамрăксем пушă мар,—сăлтав тупса калать ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Давыдова юлташ.

Паллах, çак шухăш-хăмăлпа пурăнсан, йĕлтĕрлĕ ăмăртăва ăнăçлăн ирттерме çук.

Шашкар ялĕнче кăна 27 çамрăк йĕлтĕрлĕ ăмăртăва хутшăнма пултарать. Анчах та вĕсене ку ĕçе явăçтарма никам та шутламасть.

Паянхи куна Сĕнтĕр районĕнче йĕлтĕрлĕ ăмăртăва хатĕрленме пуçăнман-ха.

Т. ИВАНОВ.
(Хамăр корр.).

ФЕЛЬЕТОН ВЫРĂННЕ

Лаша мĕншĕн туртмасть?

Тем те курма пулать çул çинче.

Пĕррe çапла Красноармейски районри «Четай» колхоз членĕпе çул çине тухма тиврĕ. Çулĕ тип-тикĕс, анчах пирĕн лаша пушăлла та юртмасть. Кайсан-кайсан умра çырма курăнса кайрĕ.

—Чим-ха, аналлa вăйлă анма тивет, ут таврашне юсам,—терĕ манăн лавçă, 70 çулхи мучи.

Аçам çухине сирсе ячĕ, алсине хывса лаша çурăмĕ çине хучĕ. Унтан урхалăхпа хырăмсалăха хытарчĕ.

—Аналлa пĕрре чупма тытăнсан... çĕлĕкна çеç лайăхрах, пусарах ларт...—тесе шÿт туса илчĕ мучи.

Аналлa аннă чухне лаша, çунана чарайман пирки, сиккипе чупма пуçларĕ. Малтан урхалăх татăлчĕ, унтан—тилхепе. Эпир вара уяр та çил-тăмансăр кунах çил-тăман вĕçтерсе кĕпер çинелле тухса вăркăнтăмăр.

Анланма йывăр пулчĕ: те лаши çунана, те çуни лашана туртрĕ. Анчах çакна курма тĕл килчĕ: лашин сÿсменĕ хăлхи патнех çитсе ларнă, йĕнерчĕк тепĕр май çаврăнса кайнă, хырăмсалăх турта çумĕнче явкаланса пырать. Кĕпер урлă каçсанах лаша чарăнчĕ.

—Эс, шăллăм, çакăншăн кам айăплă тетĕн вара?—ыйтрĕ мучи, ман çине тинкерсе пăхса. Анчах эпĕ каласса кĕтмесĕрех хăй çапла пуçларĕ: йăлтах конюхсем айăплă. Председатель А. Александров айăплă. Лашасемпе ут таврашĕсем çине çаврăнса та пахмассĕ. Çавăнпа ут таврашĕсен тĕлĕ йĕрĕ çук. Аçта та пулин каймалла пулсан, çунине пĕр сын патĕнче, сÿсменне е пĕккине тепĕр килте шырас пулать. Вара çур кун иртсе те каять.

Татăлса пĕтнĕ тилхепепе хырăмсалăха юсаса тăнă вăхăтра çул çинче тепĕр лав курăнса кайрĕ. Сÿсмен пăявĕсене пĕр пек туса çыхман, пĕкки пĕр еннелле чалăшса кайнă. Лаша чупнă май, пĕкĕпе сÿсмен лăштăр-лăштăр силленсе пыраççĕ. Лашинчен пăс мăкăрланса пырать. Эпир часах ăна палласа илтĕмĕр. Красноармейски районри «Большевик» колхозăн председателĕ Я. Кузьмин юлташ иккен вăл, района канашлăва кайма тухнă.

— Акă мĕнле председатель,—терĕ хам ăшра.—Лашин сÿсменĕ шысăк, сÿсмен пăявĕсен тăршшĕне тĕрĕслемен...

Ун пек чухне, паллах, хăмăт лаша кăкăрне суранлататать, лашана йывăр, вăл чупмасть, ăна тивĕççĕр хĕнеççĕ. Председатель çакна курмасть. Куçне хупса пырать-ши вăл?

—Çак сын председатель-и вара? питне унне кĕççе çĕленĕ пуль...

—Александровпа Кузьмин пек тимсĕр председательсем, нумаях мар пулин те, пур-ха вĕсем.

Эпĕ вара старике Елчĕк районĕнчи «Марс» колхозри лашасем çинчен каласа пама тытăнтăм. Унта лашасене лайăх пăхаççĕ, тетĕп, конюхсем кунĕн-çĕрĕн витере ĕçлеççĕ. Лашасем мăнтăр та вăйлă. Кашни лашан кÿлмелли япаласем уйрăм. Ут таврашсене ятарласа уйăрнă пÿртре тытаççĕ. Кашни лаша валли çуна пур. Ку колхозра лашасене тирпейсĕр тыткаласа суранлатни нихăçан та пулман. Витесем таса. Колхоз председателĕ коммунист А. Газовпа унăн заместителĕ Салахеев юлташсем конюхсем лашасене мĕнле пăхнине, витери йĕркелĕхе асăрхаса тăраççĕ.

—Лайăх тĕслĕх шырама мĕншĕн Елчĕк районне каяс,—терĕ мучи, кăшт çилленсе.—Хамăр районри «Чамыш» колхозах илер. Ут таврашĕсем —сарайĕнче, уйрăмшарăн çакăнса тăраççĕ. Çунасем уйрăм çĕрте, хÿтлĕхре лараççĕ. Лашисем — мăнтăр. Конюхсем лашасене юратса пăхаççĕ. Колхоз ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм ĕçсене вăхăтра туса пырать. Ĕç пĕтĕмпех колхоз руководителĕсенчен килет. Начар колхозсем е япăх лашасем çук, тимсĕр те ĕç ответлăхне туйман руководительсем пур,—тесе вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне мучи.

Мучи тĕрĕс калать. Лашасене чунсăррăн пăхакансене хирĕç вăйлăн кĕрешмелле. Лашасене юратса пăхмалла, вăхăтра çитермелле, шăвармалла, ут таврашĕсене йĕркелемелле. Вара лаша лайăх туртать. Ун пек лашасемпе çитес çуракине ăнăçлăн хатĕрленсе ирттерме пулать. Анчах Александровпа Кузьмин пек руководительсем çакна маннă пулас.

С. ШАДИН. (Хамăр корр.).

РЕДАКЦИРЕН: Красноармейски районĕн руководителĕсем çак материал тăрăх тивĕçлĕ мерăсем йышăнасса шанатпăр.

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВАРÇА ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен тĕп ставки çапла пĕлтерет: Римран кăнтăртарахра аннă американецсемпе акăлчансен çарĕсене çĕнĕ вăйсем хушса панă. Кăштах малалла куçса, союзниксен çарĕсем кĕпер умĕнчи укреплени районĕнче хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

Американецсен 5-мĕш армийĕн тĕп фронтĕнче французсен чаçĕсем паха çÿллĕ вырăна тытса илнĕ. Тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, американецсен чаçĕсем Кассино районĕнче малалла куçнă. Фронтăн Адриатика тинĕсĕ енчи флангĕнче дозорсем çапăçнă.

Енерхи начар çанталăк авиацие çапăçма кансĕрленĕ.

ЮГОСЛАВИРИ ХАЛĂХА ИРĔКЕ КĂЛАРАССИШĔН КĔРЕШЕКЕН ÇАРĂН ĔÇĔСЕМ

ЖЕНЕВА, январĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен илнĕ хыпарсем тăрăх, Югославири халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар Югославире чылай районсенче çапла активлă операцисем туса пырать.

Хĕвеланăç Боснире Югославири халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем нимĕçсем хăйсен юлашки наступлени вăхăтĕнче тытса илнĕ территорие тăшмантан тасатса пыраççĕ. Нумаях пулмасть Козара патнелле хĕсĕнсе кĕрсе кайнă нимĕç дивизине çĕмĕрсе тăкнă та Банья-Лукапа Босанска Градишка патнеелле хăваласа янă. Тузла хулинче (Хĕвелтухăç Босния) çапла урамсенче çапăçаççĕ.

Ликăра Перушич хули патĕнче хытă çапăçаççĕ, çав хула нимĕçсен аллинче. Нимĕçсен 114-мĕш горнăй егерски дивизийĕпе «Юман çулçи» ятлă 264-мĕш моторизованнăй дивизийĕ, танксем пулăшнипе, Оточац хулине тытса илнĕ. Фронтăн Огулин—Карловац секторĕнче çапла хытă çапăçаççĕ. Озальпе Крацице хулисем хушшинче Югославири халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем тăшман атакисене пурне те сирсе янă та нимĕçсене хирĕç хăйсем контрнаступлени пуçласа янă.

Дивачире, Триест çывăхĕнче, словенсен 19-мĕш бригадинчи боецсем нимĕçсен тĕреклетнĕ пунктне пĕтерсе тăкнă, хĕçпăшал тата çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ. Унти чугун çул станцине мĕнпур сооруженисемпе пĕрле йăлтах ишсе пĕтернĕ.

ЖЕНЕВА, январĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен илнĕ хыпарсем тăрăх, Хĕвелтухăç Боснире фронтăн Добой—Тузла секторĕнче çапла хаяр çапăçусем пыраççĕ. Кунта нимĕçсен тата усташсен чаçĕсем нимĕçсен Тузла хулинче çавăрса илнĕ гарнизонне пулăшма татса кĕрсе каясшăн. Тузла хулинче хăйĕнче те вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Çавăн пекех тата Зворник патĕнче те хаяр çапăçусем пыраççĕ.

Хĕвеланăç Боснире çапăçусем Мрконич-Града хули патĕнче тата Ливно—Грахово секторĕнче пыраççĕ. Кунта нимĕçсен колоннине аркатса тăкнă, çапăçура 150 гитлеровеца пĕтернĕ. Нимĕç чаçĕсемпе Михайлович четникĕсем Сень хули патнелле шăтарса кĕрсе кайнă та хулана тытса илнĕ. Герцеговинăра Гацкопа Невесине хушшинче çапла вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Кăнтăр Далмаци партизанĕсен отрядĕнчи боецсем Имотско патĕнче чылай ăнăçлă операцисем туса ирттернĕ. Тăшман салтакĕсене нумай вĕлерсе пĕтернĕ тата темиçе грузовик пĕтерсе тăкнă.

ЖЕНЕВА, январĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн Хĕвеланăç Боснире çапăçакан чаçĕсем Мрконич-Град хулине çĕнĕрен тытса илнĕ, округа нимĕç çарĕсемпе четниксенчен пĕтĕмпех тасатнă.

Ливнопа Гламоч секторĕнче халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем тăшмана Ливно еннелле ăнăçлăн хĕссе пыраççĕ. Добойпа Тузла районĕнче (Хĕвелтухăç Босния) хаяр çапăçусем пыраççĕ. Кунта нимĕçсем вăйлă подкрепленисем илсе пынă. Нимĕçсен пĕр колонни, танксем пулăшнипе, Тузла еннелле çĕмĕрсе кĕрсе кайнă. Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн Тузла хули урамĕсенче çапăçнă чаçĕсем хуларан тухса кайма приказ илнĕ. Тузла хулинче пынă çапăçусенче гитлеровецсен, вилнисене кăна шута илсен те, 500 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

Югославири халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн 5-мĕш дивизири чаçĕсем Калиновика тытса илнĕ, çапла вĕсем Сараевопа Герцеговина хушшинчи шоссе çулне татнă.

Хорватин тинĕс çумĕнчи пайĕнче халăх çарĕн чаçĕсем Сень хулине тытса илнĕ нимĕçсен çарĕсемпе хытă çапăçаççĕ.

США-ри производствăллă профсоюзсен конгресĕ Рузвельта тепĕр хут суйлама чĕнет

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркра производствăллă профсоюзсен Конгресне кĕрекен профсоюзсен представителĕсен митингĕ пулса иртнĕ. Çав митингра 2.000 çын пулнă. Митинг Рузвельта тăваттăмĕш срока президента суйлама чĕнсе резолюци йышăннă.

США-ра литейщиксем забастовка тума пăрахнă

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри ĕç федерацийĕнче тăракан 6.000 рабочи-литейщик забастовка тума пăрахма йышăннă. Çав забастовка вăл 80 çар завоне сарăлнă пулнă. Вăл ĕç укçи пирки пуçланса кайнă.

Боливири лару-тăру

ВАШИНГТОН, январĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). США-н государство департаменчĕ заявлени пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: Боливи правительствине 1943 çулхи декабрĕн 20-мĕшĕнче сирпĕнтерсе антарни, хăйне уйрăм условисенче пулса иртнĕ, çав условисем вĕсем çав ĕçе союзниксене хирĕç пыракан ушкăнсем тунă теме май параççĕ. Çавăнпа та США правительстви Боливин хальхи правительствине йышăнма килĕшмерĕ, тенĕ.

Пĕрлешÿллĕ Штатсем хăйсен посолне Боллана Боливирен каялла чĕнсе илнĕ.

ЛОНДОН, январĕн 25-мĕше. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден паян общинăсен палатинче çапла каланă: Англи правительстви Боливин декабрĕн 20-мĕшĕнчи переворот хыççăн тунă правительствине законлă правительство тесе йышăнмасть. Çавăнпа Ла Пас хулине (Боливи столицине) яма уйăрса хунă Англи посланникĕ унта каймасть.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Уругвайпа Куба правительствисем Боливи правительствине йышăнмаççĕ.

Англи адмиралĕ калани

ЛОНДОН, январĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, тинĕс-çар министерствин информаци службин начальникĕ—парламент членĕ адмирал Джеймс Лидсе хулинче сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: «Англин тинĕс-çар флочĕ иккĕмĕш фронта уçма пĕтĕмпех хатĕр, хăйĕнчен мĕн ыйтнине вăл пĕтĕмпех пурнăçа кĕртĕ. Вăрçă пĕр майпа çеç пĕтме пултарать: тинĕс-çар флочĕ, авиаци хÿтĕлесе пынипе, малтан палăртса хунă пунктсене çарсем илсе пырса антарĕ, çав пунктсем çине малтан сывлăшран бомбăсем нумай пăрахĕç», тенĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер союзниксен йывăр бомбардировщикĕсем Хĕвеланăç Германири тĕрлĕ объектсене тапăннă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 21 самолетне персе ÿкернĕ.

Çав вăхăтрах тăшманăн Çурçĕр Францири çар объекчĕсене атакăланă.

Юлашки эрнере Англи авиацийĕ Германие икĕ хутчен питĕ вăйлă тапăннă. Пĕрре, январĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле, Берлина, тепре—Магдебурга тапăннă. Берлин çине 2.300 тонна бомба пăрахнă, Магдебург çине—2.000 тонна. Круппăн Эссен хулинчи завочĕсене пĕтĕмпех ишсе антарнă хыççăн тата Берлинри çар промышленноçне те чылаях сиенленĕ хыççăн, Магдебург Германи пурнăçĕнче питĕ кирлĕ хула пулса тăнă, вăл танксем, тупăсем тата тĕрлĕрен хĕçпăшал туса кăларакан промышленность центрĕ пулса тăнă.

ЛОНДОН, январĕн 26-мĕшĕ. Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: январĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле бомбардировочнăй авиацин «Москито» йышши самолечĕсем Хĕвеланăç Германири чылай объектсене атакăланă. Ытти самолетсем Çурçĕр Францири объектсем çине бомбăсем пăрахнă. Пур самолетсем те хăйсен базисене таврăннă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ЯНВАРЬ УЙĂХĔНЧИ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Англи тата Америка самолечĕсем январĕн 1-мĕшĕпе 26-мĕшĕ хушшинче Германи çине тата Европăри вăл оккупациленĕ çĕршывсем çине 12.000 тонна бомба пăрахнă.

Союзниксен çухатăвĕсем, Германи авиацийĕн çухатăвĕсемпе танлаштарсан, пĕчĕккĕ, сывлăшран тапăнас ĕçе хутшăннă самолетсен 5 проценчĕ чухлĕ кăна çухалнă.

Союзниксен авиацийĕн Вăтаçĕр тинĕсĕн районĕнчи çухатăвĕсем юлашки уйăхсенче пĕр процент чухлĕ пулнă. Январĕн 1-мĕшĕпе 26-мĕшĕ хушшинче союзниксен авиацийĕ 20.000 хутчен самолетсемпе вĕçевĕçе кайса, çав районра 11.000 тонна бомба пăрахнă. Вĕсенчен 9.000 тоннине Итали çине пăрахнă.

ЭЙРЕРЕ ГИТЛЕРОВЕЦСЕН ИКĔ ПАРАШЮТИСТНЕ АРЕСТЛЕНĔ

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: нумаях пулмасть Эйрере Германи бомбардировщикĕсем çинчен аннă икĕ парашютиста тытса чарнă. «Дейли мейл» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, çав парашютистсенчен пĕри, Орейли ятлăскер, Германи радиостанцийĕнче диктор пулса ĕçленĕ; тепри, Патрик Кенни ятлăскерĕн, Германирен тухса кайса Эйрене анма ирĕк паракан документ пулнă. Унăн паспорчĕ çинче Эйрен Берлинри поверенннăйĕ алă пуснă. (ТАСС).

ЛĂПКА ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇА

ЛОНДОН, январĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: союзниксен çарĕсем Раму шывĕн улăхĕнчи çирĕплетнĕ пунктсенчен Япони çарĕсене хĕссе кăларнă, халĕ малалла куçса пыраççĕ.

Союзниксен авиацийĕ Рабаула темиçе хут та тапăннă. Сывлăшри çапăçусенче Японин 30 самолетне персе ÿкернĕ.

ТОКИО, январĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, январĕн 22-мĕшĕнче Рабаул хулине союзниксен 170 самолечĕ тапăннă, январĕн 23-мĕшĕнче ун çине 360 самолет бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, январĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен авиацийĕ японецсен Симпсон гаванĕнчи тата Керавия заливĕнчи (Çĕнĕ Британи) объекчĕсене ăнăçлăн тапăннă. 5 грузовой суднăна, пĕр танкера шыва путарнă, 2 танкера сиенленĕ. Японецсен 60 истребителĕ союзниксен авиацине чăрмантарма хăтланнă, анчах союзниксен самолечĕсем японецсен 24 истребительне персе ÿкернĕ.

ЧУНЦИН, январĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, американецсен «Митчелл» йышши бомбардировщикĕсем Китайăн кăнтăр çыранĕсем патĕнче японецсен 5 вăтам грузовой суднине тата тепĕр пăрахутне шыва путарнă. Çавăн пекех тата Фучжоу çыранĕсем патĕнче (Фуцзянь провинцийĕ) японецсен хуралне тапăннă чух американецсен самолечĕсем японецсен 5 грузовой суднине шыва путарнă.

Ответлă редакторшăн
П. Т. ЗОЛОТОВ.

Чăваш АССР НКВД-н Милици управленийĕ граждăнсене çакăн çинчен пĕлтерет: Совнаркомăн 1943 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕнчи 21547—Р № распоряженине пурнăçа кĕртес шутпа ытти çĕре пурăнма куçакан çынсем хăйсен хваттерĕнчен тухса кайнине паллă тумалли çакăн пек йĕрке пулать:

1. Ытти çĕре пурăнма куçакан çынсем хăйсен хваттерĕнчен тухса кайнине паллă тунă чухне паспорт сĕтелĕсем вĕсен паспорчĕсем çине прописка графи çине хăйне уйрăм штамп пусаççĕ.

2. Килхуçисен, управдомсен, комендантсен, пурăнма кĕнĕ çынсене çурт кĕнеки çине çырассишĕн ответлă пулса тăракан ытти çынсен пĕр-пĕр çын тухса кайнине паллă тутарма пынă чухне адрес листокĕсемпе пĕрле çав çынсен паспорчĕсене тата вĕсем урăх çĕре куçмаллине ĕнентерекен пĕр-пĕр документ (ĕçрен хăтарни çинчен калакан справка, тепĕр ĕçе куçма хушакан распоряжени, вербовка шучĕпе янине кăтартакан справка, милици парă пропуск, домуправлени справки) илсе пымалла.

АСĂРХАТТАРНИ: ытти çĕре пурăнма куçакан çынсен хăйсен пымалла мар, питĕ кирлĕ пулсан çеç пымалла.

3. Командировкăна, отпуска, дачăна, сывалма тата вĕренÿ сборне каякан çынсен паспорчĕсем çине тухса кайни çинчен штамп пусмаççĕ.

4. Ялан пурăнма куçса килнĕ çынсен паспорчĕсем çинче ĕлĕкхи вырăнтан тухса кайнине штамп лартса паллă туман пулсан, вĕсене çĕнĕ çĕрте ПУРĂНМА ÇЫРМАÇÇĔ.

5. Малтанхи вырăнтан тухса кайни çинчен штамп лартса паллă тумасăр çакăн пек çынсене çеç çурт кĕнекине çырса хума юрать:

а) çынсене паспорт паман вырăнтан килнĕ граждăнсене, тухса килес умĕн çеç паспорт илнĕскерсене;

б) çар çыннисене, командовани хушнипе тепĕр çĕре куçаканнисене.

6. Граждăнсем урăх çĕре пурăнма куçнине çак майпа паллă тăвас йĕркене 1944 çулхи февралĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа пурнăça кĕртеççĕ.

ЧĂВАШ АССР НКВД-н
МИЛИЦИ УПРАВЛЕНИЙĔ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4— 26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00525 Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59×42 п. л, Тираж 14.400 экз.